*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

70 (2482) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
авăн, 10

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# Çутă сăнарĕ халăх асĕнче



Чăваш Ен авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче СССР икĕ хут Геройĕн Андриян Николаев космонавт-летчикăн 85 çулхи юбилейне чыслăн палăртрĕ. Сăмах май, çак кун унăн амăшĕ Анна Алексеевна та çуралнă.

Сумлă юбилее халалласа республикăра тĕрлĕ мероприяти йĕркеленĕ: йăлана кĕнĕ спорт эстафети, «Сĕнтĕрвăрри – Шуршăл» агитчупу, вĕренекенсен сăвă, хайлав конкурсĕсем, шахматистсен тупăшăвĕ тата ыт. те.

Уяв Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнче те иртнĕ. Космонавт çуралса ÿснĕ яла чылай хăна килсе çитнĕ. Вĕсен йышĕнчех: Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕсем Петр Климук генерал-полковник, Алексей Леонов генерал-майор, Совет Союзĕн Геройĕ Анатолий Соловьев, Раççей Геройĕсем Олег Новицкий, Юрий Батурин, «Восток» космос карапĕн никĕслевçи, космос карапĕсене вĕçеве хатĕрлекен ăслăлăхпа техника центрĕн тĕп специалисчĕ Виктор Благов, «Новости космонавтики» журнал редакторĕ Игорь Маринин, Андриян Григорьевичпа Валентина Владимировна хĕрĕ Елена Андрияновна Терешкова мăшăрĕпе, ывăлĕпе, тăванĕсемпе.

Савăнăçлă митинга Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă. Пурне те Андриян Григорьевич пек паттăр пулма, унран тĕслĕх илме, тăван республикăшăн тăрăшса ĕçлеме ырă суннă.

Елена Андрияновна юлашки çулсенче Чăваш Ене тăтăшах килсе çÿрени пире савăнтарать. Ашшĕ çуралнă тăрăха манмасть вăл. Çитменнине ачисене (унăн икĕ ача), мăшăрне илсе килет. Ывăлĕ Андрей кукашшĕ пек летчик пулма ĕмĕтленет иккен.

Елена Андрияновна сăмахне ентешсем тимлесе итленĕ. «Атте тăван кĕтесне питĕ юрататчĕ, уншăн çав тери тунсăхлатчĕ. Тăван чĕлхене те питĕ хисеплетчĕ. Чĕлхене юратăр, хисеплĕр. Вăл пурнăç тымарĕ.

Аттене çуратса ÿстернĕ çĕр çинче каллех пулма тÿр килнишĕн эпĕ питĕ хĕпĕртетĕп. Тĕлĕнмелле ырă туйăмсем çупăрлаççĕ мана, ăна палăртма сăмахăм çитмест. Пурне те ыррине кăна сунатăп...» – тенĕ вăл.

Çак кунах чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлне халалласа Шупашкарти К.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче савăнăçлă каç иртнĕ.

2-мĕш стр. ➔

## УЙ-ХИР ĔÇĔСЕМ (авăн уйăхĕн 8-мĕшĕ тĕлне)

| Районсем | Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене çулнă, га | Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене çулнă, % | Тырă тĕшĕлененĕ, тн | Гектарти вăтам тухăç, ц/га | Çĕр улми кăларнă, га | Гектарти вăтам тухăç, ц/га | Пахча çимĕç пуçтарнă, га | Хăмла татнă, тн | Кĕрхи тырă акнă, га | Кĕрхи тырă акнă, % |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Улатăр | 8083 | 66,2 | 13347 | 16,5 | 25 | 144,8 | 2 | - | 24,15 | 43,1 |
| Элĕк | 7763 | 83,3 | 17078 | 22 | 86 | 167,4 | 4 | - | 1650 | 48,5 |
| Патăрьел | 17860 | 95 | 41436 | 23,2 | 533 | 158,1 | 20 | - | 2380 | 36,1 |
| Вăрнар | 14017 | 85 | 36924 | 26,3 | 45 | 195,6 | - | - | 2925 | 47,2 |
| Йĕпреç | 6650 | 85 | 12635 | 19 | 2 | 130 | - | - | 1703 | 54,9 |
| Канаш | 12346 | 80,7 | 24649 | 20 | 1 | 150 | 4 | - | 2588 | 43,1 |
| Куславкка | 9140 | 87,8 | 16633 | 18,2 | 104 | 209,2 | 29 | - | 1581 | 43,9 |
| Комсомольски | 14460 | 90,4 | 30766 | 21,3 | 112 | 190,3 | 35 | - | 2820 | 55,3 |
| Красноармейски | 9833 | 79,3 | 25518 | 26 | 99 | 167 | 1 | - | 2356 | 59 |
| Хĕрлĕ Чутай | 3729 | 85,1 | 7155 | 19,2 | 5,4 | 162,2 | - | - | 710 | 35,5 |
| Сĕнтĕрвăрри | 6280 | 92 | 13440 | 21,4 | 29 | 180 | 1 | - | 1870 | 64,5 |
| Муркаш | 12888 | 85 | 28141 | 21,8 | 4 | 120 | - | - | 4400 | 75,9 |
| Пăрачкав | 14171 | 85,1 | 28320 | 20 | - | - | - | - | 4632 | 70,2 |
| Вăрмар | 13221 | 85,2 | 26630 | 20,1 | 196 | 166,5 | - | 19,6 | 2180 | 37,6 |
| Çĕрпÿ | 15970 | 82,7 | 39425 | 24,7 | 20 | 105 | - | 10,5 | 3808 | 54,4 |
| Шупашкар | 9760 | 78,8 | 24539 | 25,1 | 29 | 171 | 6 | - | 2162 | 43,2 |
| Шăмăршă | 10980 | 95,9 | 17705 | 18,7 | 15 | 140 | - | - | 1920 | 50,5 |
| Çĕмĕрле | 2186 | 83,7 | 3780 | 17,3 | 1 | 100 | - | - | 904 | 45,2 |
| Етĕрне | 10442 | 84,9 | 26913 | 25,8 | 5 | 160 | - | 48 | 3075 | 51,3 |
| Елчĕк | 19581 | 100 | 41514 | 21,2 | 85 | 128,5 | - | - | 4500 | 78,9 |
| Тăвай | 9120 | 77,9 | 16600 | 18,2 | 10 | 160 | - | - | 1760 | 46,3 |
| Республикипе | 228436 | 85,7 | 493148 | 21,7 | 1406 | 165,6 | 102 | 78,1 | 52342 | 52,3 |

КУН ЙĔРКИНЧЕ

## Ĕнер пулманни паян çитнĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Нишер, Щамал, Туçи ялĕсенче пурăнакансем кÿршĕри Çатракассисемпе Аксаринсене чылай вăхăт ăмсаннă. Ара, вĕсем патне яка та такăр çулпа çитетĕн, сурчĕсенче çут çанталăк газĕ çунать. "Çак ырлăх мĕншĕн пĕчĕк ялсенче çук?" – пĕрре мар ыйтнă районти пуçлăхсенчен çынсем. Малашлăхсăртан хăтăлма çирĕп тĕллев лартнă вĕсем.

Паян пăх та тĕлĕн: ĕнерхи кунăн нуши-терчĕ юлманпа пĕрех. Яла асфальт çул илсе çитерет. Иртнĕ эрнере Нишерсемпе Щамалсем "кăвак çулăм" ырлăхне кĕтсе илнĕ. Ялсене газификацилемелли программăн 3-мĕш тапхăрне лекнĕ пĕчĕк ялсем, çавăнпа пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе пурнăçлама май килнĕ.

Ял çыннисене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн председателĕ Иван Моторин, Газпромăн Шупашкарти газ валеçекен пĕрлешĕвĕн тĕп ертÿçи Кияметдин Мифтахутдинов, Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Григорьев саламланă. "Республика правительстви "Газпром" пĕрлешÿпе тачă çыхăнса ĕçлени çакăн пек ситĕнÿсем тума пулăшать", – палăртнă Иван Борисович Моторин.

Канăçсăр чунпа ыррине ĕмĕтленсе пурăннă ял çыннисем те парăмра юлман – хăйсен çине алă сулман ертÿçĕсене тав тунă.

Ятарласа хатĕрленĕ факела чĕртнĕ хыççăн хăнасем кăвак çулăм мĕнле çуннине Николаевсен çуртне кĕрсе тĕрĕсленĕ. Çĕнĕ газ плити çинче çунакан çулăм пахалăхĕ савăнтарнă. Унпа вĕретнĕ чейпе пĕçерсе кăларнă вĕри кукăлĕн тути те кăмăла кайнă.

Çут çанталăк газĕ янă хыççăн Шупашкар хăнисем Александр Федоров фермер хуçалăхĕпе паллашнă. Кунта 2500 тонна çĕр улми вырнаçмалăх управ хурапти тăваççĕ. 25 млн тенкĕ тăракан строительство ĕçĕ республикăн Ял хуçалăх министерствин тĕллевлĕ программине хутшăннăран пурнăçланать. Çывăх вăхăтра объекта хута ямалла. Республикăра вăл чи пысăкки пулĕ.

Александр Федоров фермер 1000 гектар çинче пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем çитĕнтерет. Çĕр улми хальлĕхе 200 гектар йышăнать. "Иккĕмĕш çăкăра" шăрăх çанталăкра шăварса тăнă. Çакăн валли фермер тĕллевлĕ программăпа усă курса 22 млн тенкĕлĕх мелиораци техники туяннă.

Правительство ертÿçи Урхас Кушкă ял тăрăхĕнчи Наталия Кутузова фермер хуçалăхне те çитсе курнă. Кунта мăйракаллă шултра выльăх самăртма ферма витисене юсаса реконструкцилеççĕ. Ĕçлесе кайсан фермер витере сăвакан ĕнесем те тытасшăн.

***

Авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнче «Шупашкар-3» ГРСран Шупашкар районĕнчи Хыркассинчи пысăк пусăмлă газопровод патне пыракан газопровода савăнăçлă лару-тăрура уçнă. Унта Чăваш Ен пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăннă.

**Ирина ПАВЛОВА.**

# Çивĕч калаçу

Иртнĕ эрнере республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕçлĕ çул çÿревпе Етĕрнере пулнă. Çул çинче кашни вак-тĕвек куçа тăрăнать. Автовокзалри пичет киоскĕ умĕнче самантлăха чарăнсан кунта чăваш хаçат-журналне сутманни палăрчĕ. Етĕрне халăхĕ тăван чĕлхерен писнĕ тейĕн.

Чĕлхе кăна мар, вырăнти аш-какай комбиначĕн продукцийĕ те хисепрен тухнă пулас: лавккасенче тупса илейместĕн ăна. Канмалли кунсенче "Çĕрпÿ беконĕ" предприяти аш-пăшне сĕнеççĕ. Паллах, ку çителĕксĕр. Комбинат кăлпассийĕ ял лавккисенче те пулмаллине аса илтерчĕ Михаил Васильевич.

Культура çуртĕнче ирттернĕ канашлура район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Кузьмин тунă доклада сÿтсе яврĕç. Çичĕ уйăхри кăтартусем начар мар темелле. Промышленноç производствин калăпăшĕ пĕлтĕрхинчен 11,7 процент пысăкрах. Ял ĕçченĕсен ĕç укçи 12 процент хăпарнă, çапах вăл пĕчĕк-ха.

Ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов каланă тăрăх – мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсем какай хатĕрлессине 2009 çултанпа 40 процент чакарни Етĕрнесене чыс тумасть. Мăйракаллă шултра выльăх, ĕне йышĕ сахалланас туртăм пур. Халĕ килти хуçалăхсенчен сĕтĕн кашни литрне 13 тенкĕпе пуçтараççĕ. Ун хакĕ сахалтан та 15 тенкĕ пулмалла теççĕ.

Районти депутатсене сăмах тиврĕ. Хăйсен вăйĕпе туса илекен тупăша пĕлтĕрхинчен мĕншĕн 11 процент сахалрах палăртнине уçăмлă ăнлантарса параймарĕç вĕсем.

Автовокзал патнех таврăнар-ха. Ун çывăхĕнчи кафесене кĕрсе курнă хыççăн республика Пуçлăхĕ питĕ кăмăлсăр юлчĕ, мĕншĕн тесен çÿп-çап йăванать. Тасалăх культури пĕчĕк шайра. Çак йĕркесĕрлĕхсемшĕн никам та явап тытмасть.

Мускав – Хусан чукун çулăн хăвăрт çÿрекен пуйăсĕсен трасси Етĕрне патĕнчен иртесси çинчен те калаçу пулчĕ. Анчах вăл хăçан пуçланасси хальлĕхе паллах мар-ха.

Етĕрнере тепĕр проекта пурнăçа кĕртесшĕн. Йăлари хытă каяша уйăрмалли пункт тăвас ыйту тахçантанпах çакăнса тăрать. Михаил Игнатьев ку проекта республикăн инвестици программине кĕртме сĕнчĕ.

**Станислав ГРИШАЕВ.**

ШУТ-ХИСЕП

## Ял, вăрман тата сунар хуçалăхĕсенче вăй хуракансен кашни уйăхри вăтам ĕç укçи, тенкĕпе




2013 çулхи кăрлач-утă уйăхĕсенчипе танлаштарсан 13,8 процент пысăкрах. 2014 çулхи 7 уйăхри вăтам ĕç укçи – Чăваш Ен экономикине тÿпе хывакансен вăтам шалăвĕн 60 проценчĕ.

Реклама

## Пысăк ÿсĕм – пĕчĕк бизнесра

Кăçалхи сакăр уйăхра Россельхозбанкăн Чăваш Енри регион филиалĕ пĕчĕк тата вăтам бизнес валли 900 млн тенкĕлĕх кредит уйăрнă.

Çулталăк пуçланнăранпа пĕчĕк тата вăтам предприятисен кредит портфелĕ 7,3 процент ÿснĕ, 3 млрд тенкĕпе танлашнă. Чи пысăк ÿсĕм пĕчĕк бизнесра – 29 процент.

Банк клиенчĕсем уйрăмах çĕнĕ техника туянма, кулленхи финанс ыйтăвне татса пама кредит илеççĕ. Кунсăр пуçне вĕсем салукскăр паракан "Доступный" тата "Экспресс" кредитсемпе анлă усă кураççĕ.

Филиал директорĕн çумĕ Константин Киргизов каланă тăрăх – пĕчĕк тата вăтам бизнеса пулăшассине банк тĕп тивĕç вырăнне хурать. Кунпа пĕрлех ытти харпăрлăхлă предприятисемпе те тачă çыхăну йĕркеленĕ. Пур сыпăкри предпринимательсем валли алăк уçă.

*Раççей банкĕн 3349-мĕш лицензийĕ.*

# Çутă сăнарĕ халăх асĕнче

1-мĕш стр.

Ентешĕмĕре хисеплекенсем кунта та чылай пуçтаранăнă. «Андриян Григорьевич ĕçченлĕхпе, маттурлăхпа, ырă кăмăлĕпе ялан палăрса тăнă. Унăн вилĕмсĕр ятне ылтăн сас паллисемпе тĕнче космос историне çырса хунă. Çутă сăнарĕ ĕмĕр халăх асĕнче, ентешĕсен чĕрисенче упранĕ», – палăртнă республика ертÿçи уява пухăннисене саламланă май. Вăл Совет Союзĕн икĕ хут Геройне Алексей Леонов космонавт летчике 80 çул тултарнă ятпа Асăну паллипе чысланă.

«Эпир Андриян Николаевпа Н.Е.Жуковский ячĕллĕ Сывлăшпа çар инженери академийĕнче пĕрле вĕреннĕ, – тенĕ Алексей Леонов иртнине аса илнĕ май. – Вăл «5»-пе вĕренетчĕ, диплома та чи лайăх паллăпа хÿтĕлерĕ. Вĕçевсем хыççăн ăслăлăх ĕçĕпе тăрăшрĕ. Чăваш Ен ырлăхĕшĕн нумай вăй хучĕ. Вуннăмĕш шкул – паян эпир унта пултăмăр – вăл унăн шкулĕ, унăн ачисем. Çавăн пекех Андриян Григорьевич Шупашкарти трактор заводне çĕклеме те хутшăннă».

Çапла, мухтавлă ентешĕмĕр тивлечĕпе хăй вăхăтĕнче вун-вун шкул, больница, пурăнмалли çурт тунă. Унăн ятне Чăваш АССР Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп кĕнекине чи малтан кĕртнĕ. Вăл – Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ.

Андриян Григорьевич «Вĕç, вĕç, куккук» чăваш халăх юррине кăмăлланă. Çавна май симфони капелли уявра çак юрра шăрантарнă.

**Валентина МАКСИМОВА.**

## Аслă Çĕнтерÿ: 70 çул

# «Çапăçатпăр тумлам юн юличчен...»



**Фронтран килнĕ виç кĕтеслĕ çырусене шыраса Патăрьелĕнчи «Çăкăр» историпе этнографи музейне çитрĕм. Кунта висĕ çыру упранать. Сарăхнă хут çинчи сас паллисем тĕллĕн-тĕллĕн пачах курăнмаççĕ. Çапах та çак çырусемпе кăсăкланса паллашрăм. Шел те, вĕсенчен икĕ салтакăн шăпине пĕлеймерĕм. Тен, вулакан хăйĕн тăванне палласа илĕ, вĕсем çинчен пирĕн пата тĕплĕнрех çырса пĕлтерĕ.**

Пĕрремĕш çырăва Патăрьел районĕнчи (ун чухне Чкаловски районĕ пулнă) Алманчă ялĕнчи Александра Ивановна Васькина патне çырнă. Çыраканĕ паллă мар.

«1945 çул.

... Пурте эпир кунта пĕр тăван. Акă юрлатпăр кăшкăрса, чĕркуççи таран пылчăк çинче «айт два» каласа. Эпир хăрамастпăр вилĕмрен. Çапăçатпăр тумлам юн юличчен, çĕмĕретпĕр.

Пирĕн Мункун юррисем савăнăçлă юрăсем, кулянмастпăр, хурланмастпăр.

Ну, йăмăкăм Саня çырса пĕлтер. Манăн пур хыпарсене пĕлес килет.

Акă кĕтĕпĕр минутсерен, сехетсерен вĕçне-хĕрне тухасса. Атте-анне ывăлăрсемшĕн Турра хытă кĕлĕ тăвăр. Сирĕн кĕллĕр çитсен таврăнăпăр эпир сывлăхпа кĕркунне. Ничего, атте-анне нумай чăтнине сахаллине чăтăпăр. Ку çырăва çыратăп килтен тухни висĕ çул иртсен. Атте, анне сывă пулăр. Ывăлăра кĕтсе илĕр çĕнтерÿпе. Турра шĕкĕр. Ырлăх-сывлăх сире».

Ал çыру япăх упраннăран пĕтĕмпех вулама май килмерĕ. Автор 3-4 предложени вырăсла та çырнă.

Тепĕр салтак çырăвĕ – Талгар хулинчен. Ăна 1942 çулхи пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче Григорий Артемьев çырнă. Çыру содержанийĕ тăрăх мăшăрĕ патне яни палăрать.

«Здравствуй, Липочка!

Пирваях, Липа, сире пурсăра та питĕ пысăк салам яратăп. Сире Фаинăпа иксĕре те хытă чăмăртаса чуп тăватăп. Липа, эсĕ пĕлетĕн пулсассăн та веçех чухлаймастăн пулĕ, епле манăн сире курас килнине. Çав юратнă хĕрĕме хăçан аллăма илсе сиктерĕп-ши? Сана Липа ман пекех скучно мар пулĕ, мĕншĕн тесен санăн çумăнта Фаина, çемье, тăвансем, а манăн? Питĕ скучат туса çитрĕм.

Но унччен пĕрне-пĕри ыталаса чуп тăвиччен фашизма пĕтермелле. Унсăрăн эпир пур тăвансем пĕрле пухăнса пĕрнепĕри курас çук.

Сирĕн çырăвăрсене пурне те илсе пыратăп. Çумканне тата санăнне 3-4 мартра çырнă çырăвăрсене илтĕм. Сирĕн пурнăçăрсем çинчен пĕлтĕм. Çак кунсенче тата шкултан вутă паманшăн прокурор патне çырса яратăп. Тата Григорий Иванович патне те çыратăп. Конечно, хам сывă чухнех ун пек мăшкăллама ирĕк парас çук. Халиччен çын мăшкăлĕ пулманччĕ-ха, малашне те пулас çук. Все меры буду принимать. А если эпĕ киле чĕрĕ таврăнас пулсан Мельникова начар пулĕ. Вăл хăй ĕçĕсемшĕн хăех ÿкĕнĕ. Унччен чăтма тивет.

Çавсем çинчен аса илсен чăтма çук хурланатăп, чĕре тăвăнса килет, çурăлас патнех çитетĕп, анчах нимĕн те тăваймăн.

Ну, ладно «покажет время и на нашей улице будет ярмарка» теççĕ вырăссем».

Виççĕмĕш çырăва Николай Лисин хăйĕн ывăлĕ Геннадий патне çырнă. Сăмах Геннадий Айхи сăвăç çинчен пынине вулакан тавçăрчĕ пулĕ. Конверт çине çапла палăртнă: «п/о Тарханы Чувашской АССР Первомайский район дер. Шаймурзино НСШ ученику 2 класса Лисину Геннадию». Хăйĕн адресне те кăтартнă Николай Андреевич: «Полевая почта 43966 – ВВ Лисин Николай».

Çырăва вăл шăрçа пек илемлĕ почеркпа çырнă. Маларах вĕрентекенре ĕçлени тÿрех палăрать.

«Юратнă сынокăм Геннадий!

Сана хытă юратса пысăк салам яратăп. Санăн çыруна илтĕм, пысăк спасибо сана, мана юратса, хисеплесе çыру янăшăн. Питĕ кĕтетĕп сиртен çыру, анчах маму мана йăлтах маннă пулмалла, пĕр-икĕ сăмах та пулсан çырса ямасть. Ăшăм хыпсах çунать, анчах вăл ăна пĕлмест, пĕлесшĕн те мар пулмалла. Генок, спасибо сана, пахчана мĕн-мĕн акнине пĕлтернĕшĕн, анчах маму хăяр миçе касне, купăста миçе йăранне каламасть иккен. Кала мамуна, сана пăрça татса килсе çитертĕр. Геннадий, ачасене аван пăх, юрат вĕсене, мамуна пулăш. Вара эсĕ маттур пионер пулатăн.

Сынок сана питĕ курас килет. Сана тытса хытă юратас килет, санпа çывăрас килет. Ĕнтĕ час шкула 2-мĕш класа каймалла пулать. Малашне те тăрăшса вĕрен, малашне те отличник пул. Эпĕ хальхи вăхăтра чĕрĕ, сывлăхлă пурăнатăп.

Сывă пул. Хытă чуп тăватăп. Санăн папу. 6.8.43 ç.».

Николай Андреевич 1925 çултан пуçласа Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланиччен шкулта ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Çав вăхăтрах куçарусемпе те ĕçленĕ. Александр Пушкин хайлавĕсене куçарнă, хăй те çырнă. Вĕсене хаçат-журналта пичетлекеленĕ. Тăван ачисене те сăмах илемне туйма, юратма вĕрентнĕ. «Эпĕ ун чухне 6 çултаччĕ, – тенĕ каярахпа Геннадий Айхи (Галина Гордеева «О назначении поэта» – «Литературное обозрение»,1990 г. \4). – Сăвă мар, пĕчĕк калав тавращĕ çырнăччĕ. Атте манпа çитĕннĕ çынпа калаçнă пек пуплерĕ. «Эсĕ малашне хайлавсем çырăн, анчах ку çулйĕр çăмăл мар. Унта тĕрĕслĕх шырамалла, литературăна юратмалла, хăвăн та таса чунлă пулмалла. Çавăн пекех пĕлÿ, культура тĕлĕшпе ытти çынран уйрăлса тăмалла», – терĕ вăл. Унăн сăмахĕ кăмăла витерчĕ, пил сăмахĕ вырăнĕнче пулчĕ».

Шел, ачисем ÿссе çитĕннине курайман, вĕсен ÿсĕмĕсемпе савăнайман Николай Андреевич. Вăл 1943 çулта вăрçă хирĕнче пуçне хунă. 1953 çулта ывăлĕ ăна халаллаhəса çакнашкал йĕркесем шăрçаланă:

Çÿретĕп çĕрĕпе Смоленск тавращĕнче.
Сив çил юрпа перет, ура айне чăмать,
Çапах утатăп эп хир варринче пĕччен.

Таçта çак çĕрсенче аттеçĕм çывăрать,
Çÿретĕп çавăнпа, юра ашăтăп эп.
Йĕри-тавра сĕм каç, çил-тăвăл ахăрать...

**Валентина ПЕТРОВА.**

**Редакцирен: çырусене пĕр улăштармасăр пичетлетпĕр.**

Раççей – спорт çĕр-шывĕ

# Сывă çынра вăй вылять



Пĕтĕм тĕнчери журналистсен пĕр шухăшлăх кунĕнче Пичет суртĕнче ĕçлекенсем зарядкăна тухрĕç.

**2014 çулхи юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче Шупашкарта Пĕтĕм тĕнчери "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум иртĕ. Çавна май Чăваш Енри спорт аталанăвĕн хăш-пĕр страницисене уçас терĕмĕр.**

Тĕнчери тата Раççейри спорт юхăмне Чăваш Республики хăйĕн тӳпине хывать. 1952 çултанпа Олимп вăййисене пирĕн 40 ентеш хутшăннă, вĕсем 5 ылтăн, 1 кĕмĕл, 6 пăхăр медаль çĕнсе илнĕ. Чи паллă спортсменсене асăнмасăр иртме çук. Çӳллĕ тӳпеме хăпарнисен шутĕнче – Ардалион Игнатьев çăмăл атлет, Валерий Ярды, Ирина Калентьева велосипедистсем, Владимир Воронков йĕлтĕрçĕ, Елена Николаева, Олимпиада Иванова, Владимир Андреев хăвăрт утакансем, марафон дистанцийĕсене парăнтарнă Валентина Егорова, Татьяна Петрова-Архипова тата ыттисем.

Паян Чăваш Ен физкультурăпа спорта аталантарассипе тĕслĕх кăтартакан регионсен шутне кĕчĕ. 2013 çулхи кăтартусемпе чи чаплă наградăна – РФ Правительствин спортра пысăк ӳсĕм тунăшăн "Раççей регионĕ" номинаци премине – тивĕçрĕ. Халичен ку наградăна пĕр региона та паман. 2012 çулта çĕр-шыв субъекчĕсен массăллă физкультура конкурсĕнче иккĕмĕш вырăна тухăччĕ. Юлашки çулсенче сывă пурнăçа хăнăхтарасси, çамрăксене хулçурăма тĕреклетекен, чун хавалне çирĕплетекен секцисене явăçтарасси вăйланни чи малтанах спорт сооруженийĕсен пурлăх никĕсне çирĕплетнипе çыхăннă.

**Етĕрне районĕнчи Мăн Явăшра капмар çурт – канупа сывлăх центрĕ – туса лартнă. Район центрĕсенчи çавăн йышши комплекссенчен пĕртте кая мар вăл. "Пурте ăмсанаççĕ пире, – каласа парать ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Татьяна Леонтьева. – Уçсанах унта ытларах яшсемпе хĕрсем çӳретчĕç. Аслисем тренажер çине ларса намăс курас мар тетчĕç. Малтан пĕри килсе пăхрĕ, унтан тепри... Ак хайхи, тепĕр чухне ашшĕ-амăшĕ ачисенчен маларах çитсе спорт хатĕрĕсене йышăнать. Вăт епле улшăнать пурнăç".**

2004-2012 çулсенче республикăра 50 çĕнĕ обьект хута янă. Шупашкарти Пăр керменĕ чăннипех мăнаçланмалăх пулĕ. Ун çинчен тахçанах ĕмĕтленнĕ. Шухăшлани кĕçех пурнăçа кĕрĕ. 7,5 пин çын шăнăçать унта. Ку чухнехи технологисемпе тунă икĕ каток. Пĕринче тренировкăсем иртмелле, тепринче – ăмăртусем.

Пур хулапа районта спорт комплексĕсем ĕçлени – паянхи вăхăт палли. Сăмах май, хăш-пĕр регион çак ĕçе тин пуçăннă. Чăвашри ытти обьектсенче те хĕрӳ ĕç вĕрет. Сăмахран, велоспортмаунтинбайк, йĕлтĕрçĕсемпе биатлонистсен центрĕсене строительсем вăхăтра хута яма сăмах пачĕç. Эпир спорт çурчĕсене питĕ хăвăрт хăпартнине кура кӳршĕ республикăсемпе облаçсенчен паха опытпа паллашма килеççĕ. Хăвăр килсе туса памăр-ши текенни те пур.

**Астăватăр-и, ĕлĕкрех радиопа ирхи зарядка кĕвви пĕтĕм Союзĕпе янăратчĕ. Çакăн хăйне евĕр пĕлтерĕшĕ пулнă: ĕçе каяс умĕн çынсене чĕрĕлĕх кĕртнĕ, хавхалану кӳнĕ. Халĕ самани урăх. Ирхи зарядка сасси илтĕнмест. Шупашкарсем çĕнĕлĕх сĕнчĕç – "Ирхи зарядкăна йышпа тухăр!". Театр лапамне е кану паркне чĕннĕ чухне мĕншĕн каяс мар? Уçă сывлăш, çанталăкĕ аван. Пин-пин çын пĕр кĕвĕллĕн хускану тăвать. Пуханнисен кăмăлĕ çĕкленӳллĕ те хавас. Пурăнас килет!**

Паян чăвашри халăхăн 35,9 процентĕ, е кашни виççĕмĕш çын, сывă пурнăç йĕркине тытса пыни паллă. Хăйне аван туяканни пурнăçа ăнăçтарать, тĕрлĕ йывăрлăх умĕнче пуçа усмасть. Раççей Федерацийĕнче "Физкультурăпа спорта аталантармалли тĕп çул-йĕрсен стратегине" йышăннăччĕ. Унпа килĕшӳллĕн 2020 çул тĕлне спортпа туслисен йышне 40 процента (вĕренӳ заведенийĕсенче – 80 процента) çитермелле. Чăваш Ен çав программăна пурнăçланăпа пĕрех. Çапах лăпланса лармалли е пуçа каçăртмалли сăлтав мар ку. Физкультурниксен йышне çуллен ӳстермелли майсем çителĕклĕ. Стадионта е пĕр-пĕр секцире киленĕç тупнисем каярахпа юлташĕсене çавăтса пырĕç. Çын сиенлĕ йăласенчен хăтăлни, хăйне çĕнтерме пултарни – наци управĕпе малашлăхĕн никĕсĕ.

Пирĕн пурĕ 53 спорт шкулĕ, Олимп резервĕсен икĕ училищи. Кунсăр пуçне Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ командисене хатĕрлекен центр пур. Вĕсен тĕп тĕллевĕ – ачасене сывă ӳстересси, физкультура пĕлтерĕшне хăйсен паха тĕслĕхĕпе кăтартса парасси.

**Сочири Олимпиада умĕн Путин предпринимательсемпе тĕл пулни асра. Çапла каларĕ вăл: "Сирĕн бизнес мĕнле шайра пулнине малашне эсир массăллă спорта укçа мĕн чухлĕ хывнипе хаклăпăр". Пирĕн тăрăхра уçă кăмăллисем, халăхшăн ырă ĕç тăвакансем çук мар. Акă стоматологи клиникин хуçи Юрий Зорин Куславккари волейбол командине хăй укçипе тытса тăрать. Кунтах кӳршĕ республикăсен регионти ăмăртăвĕсене ирттереççĕ. Хамăр республикăри шкул ачисем валли уйрăм турнир йĕркеленĕ.**

2013 çулта чăваш спортсменĕсем тĕнче шайĕнчи пур ăмăртусенче те вăй виçрĕç. Çиччĕшĕ – Хусанти Универсиадăра. Пуш алăпа таврăнмарĕç: 2 ылтăн, 4 кĕмĕл, 3 пăхăр медаль. Мускаври çăмăл атлетикăн Пĕтĕм тĕнче чемпионатне пирĕн ултă спортсмен хутшăннă. Хальлĕхе аван кăтартусемпе савăнтараймарĕç-ха, çапах наградăсем – малашлăхра. Сочири хĕллехи Олимпиадăра фристайл енĕпе ăмăртнă Елена Муратова пирки те çавнах калаçăн. Пуçламăш утăм пур, чунĕпе хуçăлса ӳкмен, тĕллевĕсем анлă. Çамрăксем пирвайхи кӳренӳллĕ самантсене тӳссе ирттернĕ ĕнтĕ, кулленхи тренировкăра ăсталăха туптаççĕ.

Спорт инфраструктурине тивĕçлĕ шая çитернишĕн мухтанмалла пирĕн. Тĕнче шайĕнчи ăмăртусем Шупашкарта иртнишĕн хĕпĕртемелле. 2013 çулта тĕнчери чи вăйлă парашютистсене хапăл туса йышăнтăмăр. Умра – çĕнĕ стартсем. 2015 çулта Европăри çăмăл атлетсене кĕтетпĕр. 2016 тата 2018 çулсенче республика тĕп хулинче хăвăрт утакансен Тĕнче кубокĕ иртет.

**Çак кунсенче Китайран ырă хыпар пĕлтерчĕç. Сумо енĕпе Тĕнче чемпионатне хутшăннă пирĕн маттур хĕр Анастасия Тарасова кĕмĕл медаль çĕнсе илме пултарнă. Эппин, çине тăрса ĕçлесен, çĕнтерӳсем патне çул хыватпăр.**

Çакăн йышши сумлă форум унччен Хусанта (2009 çул), Мускавра (2010), Саранскра (2011), Якутире (2012) иртнĕ. Эпир – пиллĕкмĕш.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пысăк форума ирттерессипе çыхăннă пĕтĕм ĕçе вăхăтра, яваплăха туйса пурнăçламаллине палăртрĕ.

**Григорий СЛАВИН.**

ХИСЕП

# Ял çынни пуç таять

Кашни ялтах хастар та маттур çынсем пур. Патăрьел районĕнчи Аслă Чемен ялĕнчи Александрпа Ольга Волковсем те çак ята тивĕç. Иккĕшĕ те пурнăçĕсене хресчен ĕçĕпе çыхăнтарнă, колхозра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Александр Герасимович кăçал 85 çул тултарчĕ, мăшăрĕ Ольга Ивановна унран кăшт çамрăкрах. Пурнăç çулĕпе вĕсем 63 çул пĕрле утаççĕ.

Саня тете çамрăкранах ĕçе кӳлĕннĕ: çĕр сухаланă, сӳреленĕ, вырнă-çапнă. Ку ĕçсене пурнăçлама ăна ашшĕ вĕрентнĕ. Унсăр пуçне вăл ăста платник те пулнă. Первомайски районĕнчи «Путь коммунизма» колхозăн вылăх-чĕрлĕх витисене тума хутшăннă. Ун чухне вылăх-чĕрлĕх йышĕ хушăнсах пынă. Ахальтен мар 1955-1958 çулсенче асăннă хуçалăх миллионерсен шутне кĕнĕ. Колхозниксем йĕтĕн-кантăр, кок-сагыз çитĕнтерес тĕлĕшпе те тăрăшнă. Тыр-пулпа çĕр улми те тухăç панă.

1961 çулта Саня тете Пăлапуç Пашьелĕнчи ĕçчен те чипер хĕрпе Нати аппапа (хут çинче Ольга Ивановна) çемье çавăрнă. Вăрвар хĕрарăм пур ĕçре те пултаруллăччĕ. Çавăнпах ăна ял-йыш та кăмăллатчĕ. Мăшăрĕпе вĕсем пилĕк ача çуратса ӳстерчĕç. Шел, пĕр ывăлĕ вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Вăл та колхозри чи маттур шоферччĕ.

Ачисемпе, мăнукĕсемпе савăнаççĕ паян Волковсем. «Пурăнни, ĕçлени сая каймарĕ», – теççĕ ватăсем иртнине аса илсе. Ара, вĕсене ял çынни те хисеплет, пуç таять.

**Александр ФРОЛОВ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, авăн уйăхĕн 15-мĕшĕ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (0+)
19.00 «ПЕХИЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «СПАСАЕМ ЛЮДЕЙ ДОНБАССА» (16+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытлари кун, авăн уйăхĕн 16-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
20.45 «НА ОЛИМПЕ» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юн кун, авăн уйăхĕн 17-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «АСĂНСА, ХИСЕПЛЕСЕ...» (12+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «НА ОЛИМПЕ» (6+)
20.50 «МЫ ЗАБОТИМСЯ О ВАШЕМ ЗДОРОВЬЕ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Кĕçнерни кун, авăн уйăхĕн 18-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрне кун, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (6+)
20.30 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
20.45 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шăмат кун, авăн уйăхĕн 20-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
9.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
10.00 «ПĔРРЕХИНЧЕ 20 ÇУЛ ИРТСЕН». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
17.30 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
18.00 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
19.00 «ЧĂВАШ ÇĔРĔН ЧИ ЛАЙĂХ ЮРРИСЕМ» (12+)

**Вырсарни кун, авăн уйăхĕн 21-мĕшĕ**
9.00 «КУЛĂШ КОРОЛĔ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД (12+)
17.30 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (6+)
18.00 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
18.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
19.00 «ЧЕЛОВЕК РАССЕЯННЫЙ». СПЕКТАКЛЬ РУССКОГО ДРАМАТИЧЕСКОГО ТЕАТРА (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Авăн, 10 – юн кун | Авăн, 11 – кĕçнерни кун | Авăн, 12 – эрне кун | Авăн, 13 – шăмат кун | Авăн, 14 – вырсарни кун | Авăн, 15 – тунти кун | Авăн, 16 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 6.12 | 6.14 | 6.15 | 6.17 | 6.19 | 6.21 | 6.23 |
| | анать | 19.23 | 19.20 | 19.17 | 19.15 | 19.12 | 19.09 | 19.07 |
| Кун тăршшĕ | | 13.11 | 13.06 | 13.02 | 12.58 | 12.53 | 12.48 | 12.44 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун |
| | | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче | Вăкăр паллинче | Вăкăр паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Йĕкĕреш паллинче |

МУЗЫКА ИНСТРУМЕНЧĔСЕМ

# Алла тытрăм балалайка

Балалайка... Çак янравлă та хаваслă музыка инструменчĕ илемлĕ литературăна та, халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхне те анлăн кĕрсе юлнă.

Вырăс халăх юррисенче балалайка çинчен асăннине тăтăшах курма пулать. Чăваш юрăçисем те çак ырă та кăмăллă инструмента сахал мар юрă халалланă. Вĕсенчен пĕри – пуриншĕн те паллă:

Алла тытрăм балалайка,
Утрăм урам тăршшĕпе.
Вăрăм урам кĕске пулчĕ
Çумра савни пуррипе...

Анчах мĕнле майпа килсе лекнĕ-ха балалайка пирĕн пата?

Вырăссем чи малтан ăна XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче асăннă. 1715 çулта Санкт-Петербург чаплă уява хатĕрленнĕ. Пĕрремĕш Петĕр патша уяв оркестрĕнче мĕнле музыка инструменчĕсем пулмаллине хăй аллипе хăй çырса парать. Унăн приказĕ тăрăх – оркестрта сĕрме купăс, флейта, шăхлич, кĕтӳçĕсем калакан мăйрака, шăхличĕ ăшне пăрçа пĕрчи янă хăмпă тата балалайка пулмалла иккен.

Вăхăт нумаях та иртмест, халăх хушшинче балалайка çав тери хăвăрт сарăлать. Ялта савăнăçлă уяв-и, вăйă-и, туй-и – пур çĕрте те çак çăмăл та ансат инструмент сасси янăрать.

Чăваш халăх хушшинче балалайка хăш вăхăталла пулнине эпир Спиридон Михайлов 1852 çулта çырнă «Чăваш музыки пирки» статйинчен пĕлетпĕр. «Кĕслесĕр пуçне чăвашсен сĕрме купăспа балалайка пур, анчах та вĕсем халĕ çав тери чаплă хисепре мар, – çырнă вăл. – Кĕсле хĕссе кăлара пуçларĕ вĕсене...»

Балалайкăна вырăс халăхĕ хушшинче те çавнашкал шăпа кĕтнĕ. Мĕншĕн тесен пирвайхи балалайка хальхи пек вăйлă сасăллă пулман. Ăна, кавăн хăвăлĕ çумне çирĕплетнĕ тăмра евĕр инструмента, часах кĕслепе хут купăсăн янкăс сасси хупласа путарать.

Вырăссен пĕр ăстаçи, Василий Васильевич Андреев, сĕрме купăспа рояль калама вĕреннĕскер, тĕпренех балалайка енне çаврăнать. Унăн нумай çул хушши пытанса пурăннă асамлă хăватне уçма тĕллев лартать. Хăйĕн чертежĕпе пач çĕнĕ йышши инструмент туса хатĕрлет. 1886 çулхи раштавăн 25-мĕшĕнче балалайкăпа пĕрремĕш концерт парать. Çак кун чăннипех те балалайка иккĕмĕш хут çуралнă кун шутланать.

Каярахпа Василий Андреев тĕрлĕ калăпăшлă балалайкăсем тăвать: чи пĕчĕккисене дисканстем, пикколосем, примăсем ятсем парать, вăтаммисене – тенор, альт, чи пысăккисене – бас, контрабас.

Çапла вара балалайка калакансен оркестрĕ çуралать. Василий Андреев тунă балалайкăпа оркестр çинчен вырăс литературипе искусство деятелĕсем Петр Чайковский, Антон Рабинштейн, Николай Римский-Корсаков, Лев Толстой, Федор Шаляпин ырăран та ырă сăмах каласа хăварнă.

Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ. Балалайка пурăнать. Хăйĕн илемлĕ сассипе нумай çĕр-шыври çынсене савăнтарать.

**Иван КОНСТАНТИНОВ.**

ТĂВАНЛĂХ

# Кемĕр чăвашĕсем патĕнче

**Чăваш хăй ĕмĕрĕнче ăçта кăна çитсе тĕпленмен пулĕ. Пĕрисем пусмăрçăсенчен юта тарнă, теприсене выçлăх хăваланă. Çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Кемĕр облаçне куçнă йăхсем паян та чăваш йăли-йĕркине ахах-мерчен пек упраççĕ, ăна пуянлатса пыраççĕ. Çакăн çинчен пире Тăвай район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир ВАНЕРКЕ каласа пачĕ:**

– Инçе çул-çӳрев пирки тахçанах ĕмĕтленнĕ эпир. Тăвайра Республика кунĕ иртнĕ хыççăн çак шухăш татах вăйланчĕ. Ытти пултарулăх ушкăнĕсемпе пĕрле Кемĕртен килнĕ "Хĕлхем" ансамбле тарават йышăнтăмăр. Фольклор ушкăнĕсем уяв вĕçленсенех килĕсене пуçтарăнчĕç, кемĕрсем темиçе кунлăха килни çинчен пĕлтерчĕç.

Пĕр эрне пурăнчĕç, çитмен ял хăвармарĕç. "Пирĕн йăхсем çак тăрăхран тухнă, чун килениччен юрламасăр-ташламасăр каймастпăр", – теççĕ. Тăрмăшра, Лачкассинче, Пуянкассинче вĕсен тăванĕсем пурăнаççĕ-çке. Кирек епле яла илсен те йăхташсене тупатăнах. Эпĕ, акă, фольклор ушкăнĕнчи пĕр çынпа каласса кайрăм та вăл пире тăван тивет иккен.

– Хăвăр мĕншĕн пырса çӳреместĕр? – тени чун-чĕрене хускатрĕ.




Вара кашни çул йĕркелекен чăваш культурин фестивальне пырса курма чĕнчĕç. Пурĕ саккăрăн çула тухрăмăр. Ушкăнра ман мăшăр, аппа тата хăй тĕллĕн вĕреннĕ артистсемсĕр епле-ха! Калăпăр Вера Васильева сасси пурне те тыткăнлать, хăй те юрăсем кĕвĕлет. ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Валентина Александрова – Тăвайри культура çурчĕн ертӳçи. Владислав Степанов баянист пек ăста калаканни таврара çук. ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Геннадий Масленников – нумай уяв пуçаруçи. Çак йышпа кирек епле концертра та намăс курмăн.

Çав тери ăшшăн йышăнчĕç пире. Кунта чăваш, мари, мăкшă, вырăс, украинсен ялĕсем ларса тухнă. Кашни ял хăйĕн пултарулăхĕпе тĕлĕнтересшĕн. Тĕрлĕ курава йыхравлаççĕ, наци апатне тутанса пăхмасăр ямаççĕ. Вăт мĕнле ăш пиллĕ халăх. Пур çĕре çитсен те татулăх сисĕнет.

Пире Прокопьевск районне кĕрекен Михайловкăра кĕтеççĕ-ха. Чăваш ялĕ. Пысăк ял. Шкулĕ чаплă. Лидия Алексеевна директор кашни кабинета кăтартса çӳрерĕ, хăтлă столовăйне те кĕрсе куртăмăр. Юсав ĕçĕсем тума район хыснинчен 35 млн тенкĕ уйăрнă-мĕн. Пӳлĕмсене пăхса ытараймăн. Чăнчăн кермен.

Кунта пĕлӳ илекен ачасенчен хăшĕ-пĕри чăвашла ăнланать, çапах калаçмасть. Эпир хамăрпа пĕрле чăваш кĕнеки-журналне илсе кайнăччĕ. Питĕ хĕпĕртерĕç. Кунсăр пуçне тăван юрă-кĕвĕ çырнă диск-сене килĕштереççĕ. Пысăк курупкана уçса валеçетпĕр хайхи. Пĕри ыйтать:

– Мĕн хак вара сирĕн?

– Тӳлевсĕр, – лăплантаратпăр ăна.

Чăваш ушкăнĕ килни пирки хыпар çиçĕмле хăвăрт сарăлнă та, парне пурне те тивĕçмерĕ. Тăван пуплевшĕн, чăваш кĕнекишĕн, чуна çывăх юрă-кĕвĕшĕн тунсăхласа çитнĕ халăх тăрать пирĕн умра. Çавна май чукун çул вокзалĕ патĕнчи пĕр самант асран тухмасть. Пире ăсатма халăх йышлă тухнăччĕ. Вакуна вырнаçиччен юрă тăсса ятăмăр та, хăшĕ-пĕрин куçĕ шывланчĕ.

Аякри чăвашсем пур енĕпе те маттур тесе каласшăн. "Хĕлхем" ушкăн ертӳçи Вера Михайловна Спиридонова пек хастарсем – наци хĕлхемне чĕртекенсем. Ан тив, пурнăç нихăшĕн те çăмăл килмен пулсан та вĕсем чун хавалне çухатман. Вера Михайловна халăх культурине упрассипе пархатарлă ĕç тăвать. Ăна Чăваш наци конгресĕ Хисеп хучĕ пама йышăннине ырлатпăр.

Кемĕр облаçĕнчи чăваш наци культура автономийĕн ĕçне йĕркелесе пыраканни – Василий Филиппович Антонов. Çӳлерех асăннă фестивальсем ирттересси-пе пуян опыт пухнă.

Пирĕн мăн асатте Ефим Афанасьевич Афанасьев выçлăх çулĕсенче çемйипе Кемĕре çитни, хăйĕн килĕнче пĕрремĕш шкул уçни çинчен илтме кăмăллă пулчĕ. Мухтанать тесе ан шутлăр, чăваша сыхласа хăварассишĕн чунне пама хатĕр çынсемпе мăнаçланасчĕ пирĕн.

**Çав тăрăхри ялсенче пулса курнă май хăш-пĕр шухăша каласах килет. Сăмахран, тасалăх культури пирки. Урамсенче – асфальт сарнă яка çул. Пĕр пирус тĕпĕ йăваланса выртмасть. Килсем умĕнчи чечек клумбисем куçа йăмăхтараççĕ. Картишĕсем тирпейлĕ, симĕс курăк кавирĕ тăрăх утатăн.** Çывăхри çĕр кăмрăкĕ кăларакан вырăнсене те кайса куртăмăр, унта груз турттаракан, виçĕ хутлă пӳрт çӳллĕш машинăсенчен тĕлĕнтĕмĕр. Сăмах май, ялти çынсем çуртсене кăмрăкпа хутса ăшăтаççĕ.

Çак çынсем çут тĕнчене пурăнмах килнĕ...

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ**
**çырса илнĕ**.

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 10.09 | 11.09 |
|---|---|---|---|
| Температура, $^{0}$С | 2–4 сехетре | +6 | +8 |
| | 14–16 сехетре | +17 | +18 |
| Çумăр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 757 | 758 |

РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**6. Песок,** гравмассу, чернозем, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**23. Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Доставка. Тел. 89061355241.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**550. Гравмассу, песок** речной, **щебень.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**583. Гравмассу, песок, торф, щебень.** Т. 89050282225.

**591. Мед цветочный с собственной пасеки** с доставкой. Т. 89279903070.

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН – Г. А. МАКСИМОВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 3399
Тираж 3752

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.